25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
МАЙ
17
ВЫРСАРНИКУН
113(6048) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Чăваш АССР районĕсенче 1942 çулта тырпул тата выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем туса илмелли план çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ йышăннă постановлени

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1941 çулти мартăн 13-мĕшĕнче «Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ÿстернĕшĕн колхозниксене ĕçшĕн хушса тÿлесси çинчен» йышăннă постановлени тăрăх, Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ çапла йышăнаççĕ:

1. Чăваш АССР районĕсем тăрăх 1942 çулта ялхуçалăх культурисен тухăçлăхĕ тата выльăх-чĕрлĕх продуктивноçĕ вăтам шутпа 1, 2, 3, 4, 5, 6, 7, 8, 9-мĕш хушса çырнисенче кăтартнă чухлĕ пулмалла туса план çирĕплетес.

2. Республикăри пур районсенче те мăйракаллă шултра çамрăк выльăхсем талăкра вăтам шутпа çакăн чухлĕ хутшăнса пымалла туса планлă задани çирĕплетес (грампа):

Выльăх ăрачĕсем	6 уйăха çитиччен	6 уйăхран пуçласа 1 çула çитиччен	1 çултан пуçласа 2 çула çитиччен
Симентальски	550	450	350
Хĕрлĕ Горбатовски ăрат тата симентальски ăратăн метисĕсем	500	400	330
Вырăнти выльăхсем	450	370	300

3. Райсоветсен исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсене, районсем валли панă планлă задание шута илсе, кашни колхоз тăрăх ялхуçалăх культурисем тата выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем туса илмелли плана вунă кунлă срокра туса хатĕрлесе çирĕплетме тата колхозсем патне çитерме хушас; уйхир ĕçĕн бригадисен, звенисен, выльăх-чĕрлĕх фермисен тĕрлĕ культурăсем туса илмелли планĕсене тата выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем туса илмелли заданисене колхозниксен пухăвĕсенче сÿтсе-явса çирĕплетме хушас.

4. Çакăн пек йĕрке тăвас: СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) 1942 çулти апрелĕн 13-мĕшĕнче йышăннă постановленире кăтартнă минимум чухлĕ ĕçлесе илнĕ колхозниксем кăна ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ÿстермелли плана ирттерсе тултарнăшăн ĕçшĕн хушса илме пултараççĕ.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ **А. СОМОВ.**

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ **И. ЧАРЫКОВ.**

1942 çулти майăн 14-мĕш.

ЧĂВАШ АССР СОВНАРКОМĔПЕ ВКП(б) ОБКОМ БЮРОВĔН ПОСТАНОВЛЕНИЙĔ ÇУМНЕ

хушса çырнисем

Хушса çырни № 1

Чăваш АССР-ĕнчи колхозсенче 1942 çулта тĕштырă культурисем туса илмелли план (гектартан, центнерпа)

Районсем	Тĕштырăсем (кĕрхи тата çурхи)	ВĂЛ ШУТРА: Ыраш	Кĕрхи тулă	Çурхи тулă	Сĕлĕ	Урпа	Вир	Хуратул	Пăрçа	Ясмăк	Вика	Чина	Пăри
Улатăр	13,2	15,5	14,0	12,0	12,1	—	10,9	8,2	11,0	8,8	9,5	—	—
Элĕк	13,0	13,5	11,0	11,8	14,2	14,8	8,5	8,0	10,1	10,0	12,2	—	12,0
Вăрнар	14,0	15,0	14,5	13,2	14,9	14,8	10,6	9,1	11,0	10,3	12,0	—	14,5
Йĕпреç	13,5	14,5	13,7	12,5	14,6	13,0	10,6	8,5	10,4	9,5	10,6	—	12,0
Ишлей	13,0	14,2	11,0	10,5	13,5	14,0	—	8,5	9,7	10,0	11,0	10,0	11,5
Калинински	14,0	14,7	13,0	12,2	15,7	14,8	11,2	9,0	9,8	10,0	12,4	10,0	13,0
Канаш	12,5	13,6	12,0	11,1	13,0	14,7	8,9	8,0	9,4	9,0	9,5	9,8	13,0
Куславкка	12,6	13,8	12,5	10,9	12,3	14,3	9,0	7,5	9,8	9,0	10,5	10,8	10,4
Комсомольски	13,6	15,5	13,0	11,9	13,9	14,0	9,8	8,0	10,0	9,6	10,3	—	12,3
Красноармейски	13,2	14,0	12,7	11,9	13,2	14,7	—	—	11,1	10,2	12,0	9,8	12,2
Хĕрлĕ Чутай	13,5	15,0	12,0	10,7	14,1	14,0	10,0	8,3	9,5	10,0	11,5	—	—
Сĕнтĕрвăрри	13,1	14,5	13,0	11,0	13,5	14,3	—	8,0	10,5	9,6	11,5	—	—
Кувакино	12,2	14,3	13,7	10,3	12,2	—	9,8	8,0	9,0	9,1	10,5	—	—
Октябрьски	12,8	14,2	12,3	10,8	13,3	14,3	—	8,0	9,7	8,3	9,8	9,8	11,0
Первомайски	13,0	14,7	12,5	12,0	13,4	—	10,2	8,3	10,5	10,0	10,5	—	11,2
Пăрачкав	12,3	14,0	13,5	11,8	13,0	—	9,8	7,5	9,1	9,4	10,5	—	—
Советски	13,4	14,4	12,0	11,8	14,5	14,7	10,0	9,0	10,9	10,5	12,0	9,8	12,0
Сĕнтĕр	13,9	14,8	12,6	11,4	14,6	14,8	10,0	9,0	10,5	10,2	12,0	—	13,0
Вăрмар	12,0	13,6	12,6	11,2	12,7	14,6	9,5	8,2	10,0	9,0	10,5	10,2	11,5
Çĕрпÿ	12,7	13,6	12,0	11,8	13,4	14,7	10,0	8,2	10,5	10,2	11,0	10,7	12,0
Шупашкар	13,3	14,8	12,1	11,7	12,3	14,7	10,0	10,0	10,5	10,0	11,0	—	11,2
Чкаловски	13,6	15,6	14,0	12,5	14,0	14,0	9,5	8,0	8,5	9,4	9,9	—	11,7
Шăмăршă	12,6	14,4	12,3	12,2	13,0	—	9,5	7,5	8,5	8,5	9,8	—	12,0
Шăхасан	13,3	14,0	13,5	12,0	14,0	14,7	—	9,0	10,5	9,6	10,0	10,5	12,8
Çĕмĕрле	13,1	14,5	12,5	11,5	14,0	14,8	11,2	8,0	9,8	9,8	11,0	—	—
Етĕрне	14,0	14,8	12,3	11,5	14,6	14,5	10,3	9,1	9,3	10,5	11,6	—	—
Елчĕк	14,4	15,5	13,0	13,3	14,0	—	9,5	7,7	9,0	9,0	10,2	—	10,5
Тăвай	13,6	15,0	13,5	12,0	13,8	14,7	9,5	8,0	10,8	10,2	11,0	10,5	13,0
Шупашкар хули	13,4	14,8	12,5	11,9	12,5	—	10,0	—	10,5	—	11,0	—	—
ЧАССР тăрăх	13,2	14,5	13,0	1,8	13,7	14,7	10,0	8,1	10,0	9,6	11,0	10,4	12,0

Хушса çырни № 2

Чăваш АССР-ĕнчи колхозсенче 1942 çулта техникăллă культурăсем туса илмелли план (гектартан, центнерпа)

Районсем	Йĕтĕн: Сÿсĕ	Йĕтĕн: Вăрлăхĕ	Кантăр: Сÿсĕ	Кантăр: Вăрлăхĕ	Махорка	Кок-сагыз: Чĕрĕ тымарсем центнерпа	Кок-сагыз: Вăрлăхĕ (кгр)
Улатăр	3,6	3,3	—	—	15,0	—	—
Элĕк	—	—	3,9	3,6	—	—	—
Вăрнар	3,6	3,3	4,3	4,0	17,0	10,0	3,0
Йĕпреç	3,3	3,2	3,9	3,7	15,0	—	—
Ишлей	—	—	4,0	3,8	—	—	—
Калинински	—	—	4,3	3,9	17,0	—	—
Канаш	—	—	3,9	3,6	—	10,0	3,0
Куславкка	—	—	4,1	3,8	—	10,0	3,0
Комсомольски	—	—	3,9	3,7	14,0	10,0	3,0
Красноармейски	—	—	4,3	3,9	14,0	—	—
Хĕрлĕ Чутай	3,6	3,3	4,3	3,9	15,0	10,0	3,0
Кувакино	3,3	3,2	—	—	14,0	—	—
Сĕнтĕрвăрри	—	—	4,1	3,8	—	—	—
Октябрьски	—	—	4,2	3,9	—	10,0	3,0
Первомайски	3,3	3,2	4,0	3,7	—	10,0	3,0
Пăрачкав	3,4	3,2	—	—	14,5	—	—
Советски	—	—	4,3	4,0	—	—	—
Сĕнтĕр	—	—	4,3	4,0	—	—	—
Вăрмар	—	—	4,1	3,8	—	10,0	3,0
Çĕрпÿ	—	—	4,0	3,8	14,0	10,0	3,0
Шупашкар	—	—	4,2	3,9	—	—	—
Чкаловски	—	—	3,5	3,3	—	10,0	3,0
Шăмăршă	3,1	2,8	3,9	3,6	—	10,0	3,0
Шăхасан	—	—	4,2	3,9	—	10,0	3,0
Çĕмĕрле	3,5	3,3	4,2	3,9	14,0	—	—
Етĕрне	3,5	3,3	4,2	3,9	—	—	—
Елчĕк	—	—	4,0	3,7	—	10,0	3,0
Тăвай	3,0	2,8	4,2	3,9	—	10,0	3,0
Шупашкар хули	—	—	—	—	—	—	—
ЧАССР тăрăх	3,4	3,2	4,1	3,8	15,0	10,0	3,0

Хушса çырни № 3

Чăваш АССР-ĕнчи колхозсенче 1942 çулта пахча-çимĕç культурисем туса илмелли план (гектартан, центнерпа)

Районсем	Купăста: Ирхи	Купăста: Вăтам тата кая юлса пулаканни	Помидор	Хăяр	Хĕрлĕ кăшман	Кишĕр	Сухан	Çĕрулми	Панчасенче пулакан пахча-çимĕçсем: Парникăн кашни рамиччен	Панчасенче пулакан пахча-çимĕçсем: Теплицăри кашни квадратлă метртан
Улатăр	130	160	130	130	150	130	100	100	0,1	0,12
Элĕк	110	140	110	115	140	130	90	100	0,1	0,12
Вăрнар	110	140	120	120	140	125	100	105	0,1	0,12
Йĕпреç	120	155	120	120	140	120	100	100	0,1	0,12
Ишлей	120	150	120	120	135	110	90	106	0,1	0,12
Калинински	110	140	110	120	130	120	100	107	0,1	0,12
Канаш	120	160	130	120	140	110	100	100	0,1	0,12
Куславкка	110	140	120	115	140	110	80	105	0,1	0,12
Комсомольски	110	140	100	100	140	120	80	100	0,1	0,12
Красноармейски	120	150	110	110	130	120	70	100	0,1	0,12
Хĕрлĕ Чутай	120	150	110	120	140	110	100	110	0,1	0,12
Кувакино	130	160	120	120	150	130	90	104	0,1	0,12
Сĕнтĕрвăрри	130	150	130	130	140	130	100	105	0,1	0,12
Октябрьски	120	150	110	120	130	120	90	105	0,1	0,12
Первомайски	120	140	100	120	140	120	90	110	0,1	0,12
Пăрачкав	130	160	130	130	150	130	100	110	0,1	0,12
Советски	120	150	110	120	130	120	90	105	0,1	0,12
Сĕнтĕр	130	150	120	120	140	120	90	108	0,1	0,12
Вăрмар	120	150	120	125	150	120	80	110	0,1	0,12
Çĕрпÿ	130	160	130	130	150	130	90	110	0,1	0,12
Шупашкар	120	150	120	120	140	130	90	106	0,1	0,12
Чкаловски	110	140	120	110	140	110	80	100	0,1	0,12
Шăмăршă	110	140	100	100	130	110	70	95	0,1	0,12
Шăхасан	120	150	130	120	140	120	90	105	0,1	0,12
Çĕмĕрле	120	150	130	130	140	120	90	107	0,1	0,12
Етĕрне	130	160	130	130	140	120	90	105	0,1	0,12
Елчĕк	110	150	110	110	130	110	80	100	0,1	0,12
Тăвай	120	150	120	120	140	110	90	110	0,1	0,12
Шупашкар хули	120	150	130	120	140	120	100	110	0,1	0,12
ЧАССР тăрăх	120	150	130	120	140	120	90	105	0,1	0,12

Хушса çырни № 4

Чăваш АССР-ĕнчи колхозсенче 1942 çулта пахча-çимĕç культурисен тата выльăх кăшманĕсен вăрлăхĕсене туса илмелли план (гектартан, центнерпа)

Районсем	Хăяр	Купăста	Кишĕр	Хĕрлĕ кăшман	Помидор	Турнепс	Выльăх кăшманĕ
Улатăр	0,7	1,2	1,5	5	0,3	2	5,5
Элĕк	0,7	1,2	1,5	5	0,3	2	5,5
Вăрнар	0,7	1,2	1,5	5	0,3	2	5,5
Йĕпреç	0,7	1,2	1,5	5	0,3	2	5,5
Ишлей	0,7	1,2	1,5	5	0,3	2	5,5
Калинински	0,7	1,2	1,5	5	0,3	2	5,5
Канаш	0,7	1,2	1,5	5	0,3	2	5,5
Куславкка	0,7	1,2	1,5	5	0,3	2	5,5
Комсомольски	0,7	1,2	1,5	5	0,3	2	5,5
Красноармейски	0,7	1,2	1,5	5	0,3	2	5,5
Хĕрлĕ Чутай	0,7	1,2	1,5	5	0,3	2	5,5
Кувакино	0,7	1,2	1,5	5	0,3	2	5,5
Сĕнтĕрвăрри	0,7	1,2	1,5	5	0,3	2	5,5
Октябрьски	0,7	1,2	1,5	5	0,3	2	5,5
Первомайски	0,7	1,2	1,5	5	0,3	2	5,5
Пăрачкав	0,7	1,2	1,5	5	0,3	2	5,5
Советски	0,7	1,2	1,5	5	0,3	2	5,5
Сĕнтĕр	0,7	1,2	1,5	5	0,3	2	5,5
Вăрмар	0,7	1,2	1,5	5	0,3	2	5,5
Çĕрпÿ	0,7	1,2	1,5	5	0,3	2	5,5
Шупашкар	0,7	1,2	1,5	5	0,3	2	5,5
Чкаловски	0,7	1,2	1,5	5	0,3	2	5,5
Шăмăршă	0,7	1,2	1,5	5	0,3	2	5,5
Шăхасан	0,7	1,2	1,5	5	0,3	2	5,5
Çĕмĕрле	0,7	1,2	1,5	5	0,3	2	5,5
Етĕрне	0,7	1,2	1,5	5	0,3	2	5,5
Елчĕк	0,7	1,2	1,5	5	0,3	2	5,5
Тăвай	0,7	1,2	1,5	5	0,3	2	5,5
Шупашкар хули	0,7	1,2	1,5	5	0,3	2	5,5
ЧАССР тăрăх	0,7	1,2	1,5	5	0,3	2	5,5

Хушса çырни № 5

Чăваш АССР-ĕнчи колхозсенче 1942 çулта панулми, çырла-çимĕçсем тата хăмла туса илмелли план (гектартан, центнерпа)

Районсем	Çамрăк сад-пахчисем	Чие йышши çырла сачĕсем	Çырла-çимĕç пахчисем	Хăмла вырăнĕсем: 2 çулти хăмла вырăнĕ	Хăмла вырăнĕсем: 3 çулти	Хăмла вырăнĕсем: 4 çулти	Хăмла вырăнĕсем: 5 çулти	Хăмла вырăнĕсем: 6 çулти
Улатăр	10	15	20	—	—	—	—	—
Элĕк	10	15	20	—	—	—	—	—
Вăрнар	10	15	20	—	—	—	—	—
Йĕпреç	10	15	20	—	—	—	—	—
Ишлей	10	15	20	—	—	—	—	—
Калинински	10	15	20	—	—	—	—	—
Канаш	10	15	20	—	—	—	—	—
Куславкка	10	15	20	2	4	6	8	9
Комсомольски	10	15	20	—	—	—	—	—
Красноармейски	10	15	20	—	—	—	—	—
Хĕрлĕ Чутай	10	15	20	—	—	—	—	—
Кувакино	10	15	20	—	—	—	—	—
Сĕнтĕрвăрри	10	15	20	2	4	6	8	9
Октябрьски	10	15	20	2	4	6	8	9
Первомайски	10	15	20	—	—	—	—	—
Пăрачкав	10	15	20	—	—	—	—	—
Советски	10	15	20	—	—	—	—	—
Сĕнтĕр	10	15	20	—	—	—	—	—
Вăрмар	10	15	20	2	4	6	8	9
Çĕрпÿ	10	15	20	2	4	6	8	9
Шупашкар	10	15	20	—	—	—	—	—
Чкаловски	10	15	20	—	—	—	—	—
Шăмăршă	10	15	20	—	—	—	—	—
Шăхасан	10	15	20	—	—	—	—	—
Çĕмĕрле	10	15	20	—	—	—	—	—
Етĕрне	10	15	20	—	—	—	—	—
Елчĕк	10	15	20	—	—	—	—	—
Тăвай	10	15	20	2	4	6	8	9
Шупашкар хули	10	15	20	—	—	—	—	—
ЧАССР тăрăх	10	15	20	2	4	6	8	9

8-мĕшпе 9-мĕш хушса çырнисем 2-мĕш страницăра

Хушса çырни № 6

Чăваш АСС Республикинчи колхозсенче 1942 çулта выльăх апачлĕх акакан культурăсем туса илмелли план (гектартан, центнерпа).

Районсем	Пĕр çул ÿсекен курăксем	Нумай çул ÿсекен курăксем	Выльăх кăшманĕсем	Çаран утисем
Улатăр	20	26	150	18
Элĕк	20	22	130	18
Вăрнар	19	27	161	16,5
Йĕпреç	19	25	140	19
Ишлей	21,5	26	140	20
Калинински	19,0	23	160	16
Канаш	20,3	26	150	19
Куславкка	17,0	24	140	19
Комсомольски	18,0	23	140	16
Красноармейски	22,0	24	140	18
Хĕрлĕ Чутай	21,0	27	160	22,5
Кувакино	18,0	28	170	17
Сĕнтĕрвăрри	20,0	22	150	18
Октябрьски	20,0	24	150	19
Первомайски	20,0	25	150	17
Пăрачкав	18,0	24	170	17,5
Советски	22,0	20	140	16
Сĕнтĕр	22,0	26	160	17,0
Вăрмар	18,0	25	160	17
Çĕрпÿ	20,0	24	160	16
Шупашкар	20,0	20	160	17
Чкаловски	18,0	23	160	15
Шăмăршă	19,0	25	160	22
Шăхасан	20,0	23,0	150	19
Çĕмĕрле	20,0	24,0	150	20
Етĕрне	20,0	25	160	18,0
Елчĕк	22,0	22	150	15
Тăвай	22,0	23	140	20
Шупашкар хули	18,0	20	140	18,5
ЧАССР тăрăх	20,0	24,0	150	18,0

Хушса çырни № 7

Чăваш АССР-ĕнчи колхозсенче 1942 çулта нумай çул ÿсекен курăксен вăрлăхне туса илмелли план (гектартан, центнерпа)

Районсем	Клевер	Люцерна	Тимофеевка	Çарансемпе улăхсенчи курăксем
Улатăр	1,2	1,0	1,3	—
Элĕк	1,3	—	—	—
Вăрнар	1,5	1,0	1,3	—
Йĕпреç	1,2	—	—	—
Ишлей	1,5	—	—	—
Калинински	1,2	1,0	—	—
Канаш	1,2	1,0	—	—
Куславкка	1,3	—	—	—
Комсомольски	1,5	1,0	1,3	—
Красноармейски	1,0	1,0	—	—
Хĕрлĕ Чутай	1,6	—	—	—
Сĕнтĕрвăрри	1,5	—	—	—
Кувакино	1,1	—	—	—
Октябрьски	1,2	—	—	—
Первомайски	1,5	1,0	—	—
Пăрачкав	1,2	—	—	—
Советски	1,2	—	—	—
Сĕнтĕр	1,6	—	—	—
Вăрмар	1,2	1,0	—	—
Çĕрпÿ	1,5	—	—	1,2
Шупашкар	1,1	1,0	—	—
Чкаловски	1,1	1,0	—	—
Шăмăршă	1,0	—	—	—
Шăхасан	1,1	1,0	—	—
Çĕмĕрле	1,5	—	—	—
Етĕрне	1,5	—	—	—
Елчĕк	1,0	1,0	1,3	1,2
Тăвай	1,3	1,0	1,3	—
Шупашкар хули	1,3	—	—	—
ЧАССР тăрăх	1,3	1,0	1,3	1,2

Хушса ҫырни № 8

Чăваш АССР-ĕнчи колхозсенче выльăх-чĕрлĕх продуктивноҫĕ ӳстерессипе 1942 ҫул валли панă задани

Районсем	Фуражлă кашни ĕне сĕт мĕн чухлĕ памалла (литрпа)	Ҫулталăк пуҫланă тĕле кашни 100 ĕне пуҫне пăрусем пăхса ҫитĕнтермелле	9 уйăха ҫитнĕ кашни сысна ами пуҫне ҫăвăрсем пăхса ҫитĕнтермелле	Ҫитерсе ҫамăрăклатнă кашни сысна мĕн виҫе (килограмм)	Ҫулталăк пуҫланă тĕле кашни сурăх пуҫне ҫăм (килограмм)	Ҫулталăк пуҫланă тĕле кашни 100 сурăх пуҫне путексем пăхса ҫитĕнтермелле	Кашни кайăк-кĕшĕк мĕн чухлĕ ҫăмарта тăвасси: Чăх (штукăпа)	Кăвакал (штукăпа)	Кăркка (штукăпа)
Улатăр	1500	85	11	90	2,5	110	70	40	20
Елĕк	950	85	11	90	2,1	110	70	40	20
Вăрнар	1150	85	11	90	2,3	110	70	40	20
Йĕпреҫ	1150	85	11	90	2,3	110	70	40	20
Иккелĕ	900	85	11	90	2,1	110	70	40	20
Калинински	1050	85	11	90	2,0	110	70	40	20
Канаш	1150	85	11	90	2,5	110	70	40	20
Куславкка	1000	85	11	90	2,5	110	70	40	20
Комсомольски	1100	85	11	90	2,4	110	70	40	20
Хĕрлĕ Чутай	1100	85	11	90	2,3	110	70	40	20
Куйбышево	1250	85	11	90	2,5	110	70	40	20
Сĕнтĕрвăрри	1100	85	11	90	2,1	110	70	40	20
Октябрьски	950	85	11	90	2,1	110	70	40	20
Первомайски	1050	85	11	90	2,1	110	70	40	20
Пăрачкав	1500	85	11	90	2,6	110	70	40	20
Советски	900	85	11	90	2,1	110	70	40	20
Сĕнтĕр	1120	85	11	90	2,2	110	70	40	20
Красноармейски	1000	85	11	90	2,2	110	70	40	20
Вăрмар	1100	85	11	90	2,2	110	70	40	20
Сĕрпӳ	1200	85	11	90	2,2	110	70	40	20
Шупашкар	1100	85	11	90	2,3	110	70	40	20
Чкаловски	1050	85	11	90	2,3	110	70	40	20
Шăмăршă	1100	85	11	90	2,0	110	70	40	20
Шăхасан	1150	85	11	90	2,2	110	70	40	20
Çĕмĕрле	1200	85	11	90	2,4	110	70	40	20
Етĕрне	1100	85	11	90	2,2	110	70	40	20
Елчĕк	1150	85	11	90	2,2	110	70	40	20
Тăвай	1150	85	11	90	2,1	110	70	40	20
Шупашкар хули	1250	85	11	90	2,5	110	70	40	20
Чăваш АССР тăрăх	1100	85	11	90	2,3	110	70	40	20

Хушса ҫырни № 9

Районсем	Кайăк-кĕшĕк чĕпписене 6 уйăха ҫитиччен ӳстересси: Чăх чĕпписем (процентпа)	Кăркка чĕпписем (процентпа)	Ҫулталăк пуҫланă тĕле кашни хурт-хăмăр ҫемйи пуҫне çĕнĕ ҫемьесем (штукăпа)	Ҫулталăк пуҫламăшĕнче пулнă хурт-хăмăр ҫемйисен пыл пухасси (кг): Пыл пухмалла (пĕтĕмпе)	Вĕл шутра товарлă пыл	Хăйăс	Ҫулталăк пуҫламăшĕнче пулнă кролик ами пуҫне ҫăвăрсем ҫитĕнтересси	Ҫулталăк пуҫламăшĕнче пулнă кролик ами пуҫне тирсем (штукăпа)	Тирсем панин пĕтĕм хисепĕнчен 1-мĕш сортлă тирсем панин процентĕ
Улатăр	85	75	5	36	14	0,8	12	400	40
Елĕк	85	75	5	30	8	0,7	12	400	40
Вăрнар	85	75	5	30	13	0,8	12	400	40
Йĕпреҫ	85	75	5	37	15	0,8	12	400	40
Иккелĕ	85	75	5	28	8	0,7	12	400	40
Калинински	85	75	5	32	15	0,8	12	400	40
Канаш	85	75	5	28	6	0,6	12	400	40
Куславкка	85	75	5	34	10	0,7	12	400	40
Комсомольски	85	75	5	38	10	0,7	12	400	40
Хĕрлĕ Чутай	85	75	5	30	10	0,7	12	400	40
Куйбышево	85	75	5	35	10	0,8	12	400	40
Сĕнтĕрвăрри	85	75	5	35	10	0,7	12	400	40
Октябрьски	85	75	5	32	10	0,7	12	400	40
Первомайски	85	75	5	32	10	0,7	12	400	40
Пăрачкав	85	75	5	37	15	0,8	12	400	40
Советски	85	75	5	30	8	0,6	12	400	40
Сĕнтĕр	85	75	5	30	8	0,6	12	400	40
Красноармейски	85	75	5	32	10	0,7	12	400	40
Вăрмар	85	75	5	36	8	0,6	12	400	40
Сĕрпӳ	85	75	5	30	8	0,6	12	400	40
Шупашкар	85	75	5	32	10	0,7	12	400	40
Чкаловски	85	75	5	30	8	0,6	12	400	40
Шăмăршă	85	75	5	28	8	0,7	12	400	40
Шăхасан	85	75	5	30	8	0,7	12	400	40
Çĕмĕрле	85	75	5	37	15	0,8	12	400	40
Етĕрне	85	75	5	30	8	0,6	12	400	40
Елчĕк	85	75	5	28	6	0,7	12	400	40
Тăвай	85	75	5	30	8	0,7	12	400	40
Шупашкар хули	85	75	5	28	6	0,6	12	400	40
ЧАССР тăрăх	85	75	5	32	10	0,7	12	400	40

Ҫураки ĕҫĕсене большевикла хăвăртлăхпа вĕҫлер!

Сеялкăсем ахаль лараҫҫĕ, акасси сухалассинчен юлса пырать

СĔНТĔРВĂРРИ, майăн 15-мĕш. (Телефонпа). Юлашки эрнере районри колхозсем ҫуракине пысăк хăвăртлăхпа туни курăнать. Майăн 10-мĕш тĕлне район мĕнпурĕ те 1092 гектар сухаласа 200 гектар ҫеҫ акнă пулсан, майăн 15-мĕш тĕлне пурĕ 3.400 гектар сухаланă, 1.790 гектар акнă. Пысăк Маклашкинăри «Осоавиахим» колхоз ҫуртыррисене 5 кун хушшинче акса пĕтернĕ. План тăрăх 51,5 гектар акмалла пулнă, колхоз 56,5 гектар акрĕ. Вăл шутран оборона фондне хывма пĕр гектар пăрҫа акса хăварчĕ. Пĕчченхырти «Правда» колхоз та ҫуртыррисем акас плана чылай ӳстерсе пурнăҫларĕ. Ҫавăн пекех Пĕчĕк Маклашкинăри «Хĕрлĕ Ҫар», Ирĕк Сырма Рондинори Ленин ячĕпе тăракан колхозсем те ҫураки планне чылай ӳстерсе пурнăҫларĕҫ.

Ҫуракин малтанхи кунĕсенчех нумай колхозсем ĕҫе хастарлăн тытăнчĕҫ. Ленин ячĕпе тăракан колхозăн Соколова тата Терентьев юлташсем ертсе пыракан бригадисем пĕр-пĕринпе ăмăртса пысăк тухăҫлăн ĕҫлеҫҫĕ. Сухаҫсем Гаврилов, Николаев, Кольцов, Иванов юлташсем нормăна 125—130 проц. пурнăҫласа пыраҫҫĕ, тырă акакансем Тихоновпа Захаров юлташсем 13 ретлĕ сеялкăпа кунне 7 гектар ытла акаҫҫĕ.

Анчах та калас пулать, ҫураки ĕҫĕ районра ҫителĕксĕр пырать.

Уйрăмах Сĕнтĕрвăрринчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз ҫураки ĕҫĕнче юлса пырать. План тăрăх колхозăн 140 гектар акмалла. Майăн 14-мĕш тĕлне мĕн пурĕ те 7 гектар кăна акнă. Колхозăн пурĕ 7 сеялка, вĕсенчен пĕри юсавлă мар, ыттисем ĕҫсĕр лараҫҫĕ. Ҫав вăхăтрах юнашар колхозсем сеялкăсем ҫитмен пирки тырра алăпа акаҫҫĕ.

Астакассинчи «Большевик» колхозăн пурĕ 5 сеялка, 2 сеялки ҫеҫ юсавлă, анчах вĕсем те ахалех лараҫҫĕ. Колхоз 60 гектар ҫине алăпа акнă. Колхоз председателĕ Х. Демьянов юлташ: сеялка лакать, лашасем ҫук, тет. Колхозăн витинче 4 лаша ахалех тăраҫҫĕ, 3 лашапа кунсеренех армана ҫӳреҫҫĕ.

Колхоз ҫуракинче сӳрĕккĕн ĕҫлет. Паян куна вĕсем 600 гектар кăна акнă тата 80 гектар ытла акмалла. Ялти комсомолецсемпе учительсем ҫураки ĕҫне активлăн хутшăнман.

Ҫавăн пекех Ивановăри «Майăн 1-мĕш» колхозра та, Кайри Чиперуйĕнчи «Осоавиахим» колхозра та сеялкăсем ахалех лараҫҫĕ.

Хăшпĕр колхозсем ҫĕрĕн нӳрлĕхне сая яраҫҫĕ. Сухаланă ҫĕре ҫийĕнчех акса хăварма тăрăшмаҫҫĕ. Алатыркасинчи «17-мĕш партсъезд» [illegible]

А. РАЗИН.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Майăн 15-мĕшĕнчи каҫхи пĕлтерӳ

Майăн 15-мĕшĕнче Керчь ҫурутравĕ ҫинче пирĕн войскăсем ытларах йышлă противника хирĕҫ вăйлăн ҫапăҫнă.

Харьков енче пирĕн войскăсем наступленилле ҫапăҫусем туса пырса, малалла куҫнă. Виҫĕ кун хушшинчи ҫапăҫусенче противникăн 256 орудине тытса илнĕ тата 250 ытла танкне ҫĕмĕрнĕ, 40 самолетне персе ӳкернĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле паллă ĕҫсемех те пулса иртмен.

Майăн 14-мĕшĕнче нимĕҫсен 25 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 11 самолет пĕтнĕ.

Баренц тинĕсĕнче совет карапĕ противникăн пĕр транспортне тата хуралра ҫӳрекен икĕ карапне путарнă.

* * *

Майăн 14-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаҫĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕҫсен 100 ҫити танкне, 3 бронемашинине, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 300 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 25 лавне, горючи тултарнă 5 автоцистернине, 9 полевой тата зениткăй орудине, зениткăй пулеметсен 13 точкине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, чугунҫул ҫинчи состава ҫĕмĕрнĕ, противникăн пехотине 3 ротăна ҫити саланаса янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче ҫĕрешекен пирĕн часть нимĕҫсен темиҫе орудине, грузсем турттарса пыракан 30 автомашинине, 8 дзотне, пехотăна пĕрлех, пĕтерсе тăкнă. Ҫав участокра нимĕҫсем 300 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ.

* * *

Борисенко юлташ командир пулса ертсе пыракан чаҫăн летчикĕсем, пĕр кун хушши ҫапăҫса, нимĕҫсен 7 танкне, пехотăпа грузсем турттарса пыракан 90 автомашинине, темиҫе полевой тата зениткăй орудине пĕтерсе тăкнă, пĕр пĕлере тата боеприпассен пысăк складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Старши лейтенантăн Самодуровăн батарейинчи артиллеристсем пĕр кун хушшинче нимĕҫсен икĕ танкне, противотанковăй орудине тата 100 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Гущенко, Румянцев, Винокуров, Белоусов, Горобец красноармеецсем тата командир Пешков икĕ кун хушшинче, гранатăсемпе тата ҫунакан шĕвек тултарнă бутылкăсемпе усă курса, нимĕҫсен 6 танкне сторойран кăларнă.

* * *

В. юлташ командир пулса ертсе пыракан белорусс партизанĕсен отрячĕ чугунҫул кĕперне ҫĕмĕрнĕ тата противникăн войскăсем турттарса пыракан икĕ эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Вагонсен занчăкĕсем айĕнче нимĕҫсен 600 салтакĕпе офицерĕ ытла вилнĕ.

* * *

87-мĕш артполкăн 2-мĕш батарейинчен тыткăна лекнĕ ефрейтор Вилли Фридлянди ҫапла каласа панă: «Эпĕ Знаменкăра госпитальре пĕр уйăх выртрăм. Унта амантнă салтаксем пин сынна яхăнччĕ, вĕсене пуринчен ытла Крым фронтĕнчен илсе килнĕ. Палатăсенче пиҫĕ те тăвăрччĕ. Кашни кун ҫĕнĕ те ҫĕнĕ амантнисем килсе тăратчĕҫ. Кашни эрнере госпитальрен инҫетри тыла виҫĕ санитарнăй поезд яратчĕҫ. Мана Знаменкăран Днепропетровска ăсатрĕҫ. Ҫав хулара госпитальсемпе лазаретсем питĕ те нумай. Эпĕ 91-мĕш армейски госпитале лекрĕм. Унта койкăсене икĕ хутлă туса вырăнаҫтарнă, анчах вырăн пурпĕрех ҫитмест!»

* * *

Нимĕҫ салтакне Уль Метмаса унăн арăмĕ ҫапла ҫырать: «Паян ирхине трагедилле ĕҫ пулса иртрĕ. Филипп Германăн арăмĕ хăйĕн ачисене тата хăйне хăй вĕлерме тытăннă. Аслă ачи вилнĕ, иккĕмĕшне, йывăр амантнăскерне, амăшĕпе пĕрле больницăна илсе кайнă. Вăл йывăр асапсемпе нушана чăтса тăрайман».

* * *

Нимĕҫсен 9-мĕш пехотнăй дивизийĕнчен тыткăна лекнĕ салтак Пауль Шредер ҫапла каласа панă: «Совет Союзне хирĕҫ туса пыракан вăрҫă вăл бандитла вăрҫă. Нумай чухне вăл тата вăрҫă та мар, вăл хĕҫпăшалсăр мирлĕ халăха ирсĕррĕн вĕлерсе пĕтерни пулса тăрать. Киевра нимĕҫсен ҫар влаҫĕсем совет гражданĕсене 85 пин ҫынна, Львовра 50 пин ҫынна персе вĕлернĕ. Запорожьере эсэсовецсем старикĕсене, хĕрарăмсене, ачасене, кăкăр ĕмекен ачасене, тин ҫуралнă ачасене те тыта-тыта вĕлернĕ. Пĕр айăпсăр ҫынсене ҫавăн пек массăллăн, пĕр хĕрхенмесĕр ҫӳлтен хушнă тăрăх вĕлереҫҫĕ тенине илтсен, эпĕ тĕлĕнсех кайрăм».

* * *

Штуттгартра (Германия) товарнăй станцинче вăйлă пушар тухнă. Пакгаусем ҫунса кайнă. Ҫав товарнăй станцинче ĕҫленĕ ютҫĕршыв рабочийĕсене пурне те арестленĕ.

Майăн 16-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Майăн 16-мĕш ирхи тенĕ чух ҫĕрле Керчь ҫурутравĕ ҫинче вăйлă ҫапăҫусем малалла пулса пынă. Харьков енче пирĕн войскăсем наступленилле ҫапăҫусем туса пынă. Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле паллă ĕҫсемех те пулман.

* * *

Харьков енче пирĕн чаҫсем, малалла ăнăҫлăн куҫса пырса, халăх пурăнакан нумай пунктсене нимĕҫ оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă. Противник пысăк ҫухатусем тăвать. Тыткăна илнисем нумай. Пирĕн войскăсем танксене, орудисене, автомашинăсене, боеприпассен склачĕсене, ҫар пурлăхĕпе продовольстви склачĕсене тытса илнĕ. Пирĕн пĕр часть кăна пĕр кун хушши ҫапăҫса противникăнне 14 оруди, 64 пулемет, 93 миномет, автоматсем тата танка хирĕҫ пемелли пăшалсем нумай, 550.000 ытла патрон, минăсем хунă 205 ещĕк тата, унсăр пуҫне, боеприпассен темиҫе складне тытса илнĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнчи уйрăм участоксенче кĕрешекен пирĕн чаҫсем, виҫĕ кун хушши ҫапăҫса, тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 1.200 ҫынна ҫити вĕлерсе пĕтернĕ. Артиллерирен персе тата разведка тăвакан группăсем кĕрешсе тăшманăн 6 дзотне ҫĕмĕрнĕ. Противникăн икĕ орудине, 4 станковăй пулеметне тата пĕр катерне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Пирĕн К. юлташ командир пулса ертсе пыракан пĕр подразделени, Хĕвеланăҫ фронтĕнче противник тылĕнче кĕрешекенскер, 4 ҫар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Нимĕҫсен фашистла оккупанчĕсене 300 ҫынна ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Юсиков лейтенантăн артиллери батарейи пĕр кун хушшинче нимĕҫсен 105 миллиметрлă орудине, миномётне тата 50 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Серебряков юлташ командир пулса ертсе пыракан батальонри красноармеец-снайперсем, вунă ҫын, юлашки кунсенче 104 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Д. М. Шленкин сержантăн сапернăй отделенийĕ икĕ кун хушшинче нимĕҫсен 480 минине тупса сиенсĕрлетнĕ.

* * *

Нимĕҫсен вилнĕ ефрейторĕ Алфред ҫумĕнче вăл хăйĕн тăванĕ патне ярса ĕлкĕреймен ҫырăва тупнă. Хăй вилес умĕн темиҫе кун малтан вăл акă мĕнле ҫырнă: «...Партизансем пире кăнгăрла та, ҫĕрле те канлĕх памаҫҫĕ. Эпир тăракан ял патĕнче вăрман пур, унта партизансем пытанса пурăнаҫҫĕ. Ҫĕрле тула тухас тесен, хăвăнпа пĕрле пистолет илес пулать. Эпир Н. хулинче пулнă чухне партизансем пирĕн ҫине кашни каҫах минометсенчен перетчĕҫ. Пирĕн подразделенире нумайĕшне ĕнтĕ партизансем вĕлерсе пĕтерчĕҫ».

* * *

Финсен тыткăна лекнĕ салтакĕ Айхио Пявлус Финляндин ҫарĕнчен таракансем нумайланса кайни ҫинчен пĕлтерет. «Нумаях та пулмасть,—тет Пявлус,—Коккола местечкинче ҫар сучĕ финсен 7 салтакне ҫартан тарнăшăн айăплакан ĕҫе пăхса тухрĕ. Суд вĕсене пурне те персе пăрахмалла турĕ».

* * *

Нимĕҫсен 5-мĕш пехотнăй дивизийĕнчен тарса пирĕн еннелле каҫнă салтак Ганс Э. ҫапла каласа панă: «Мана нумаях та пулмасть нимĕҫ ҫарне илчĕҫ. Унччен эпĕ Чехире пурăннă. Унта юлашки вăхăтра нимĕҫ салтакĕсене тата эсэсовецсене час-часах вĕлерме пуҫларĕҫ. Рабочисем, ҫар валли продукци кăларассине чакарас тесе, мĕнле те пулсан хуллентерех ĕҫлеме тăрăшаҫҫĕ, станоксемпе агрегатсене пăсаҫҫĕ. Чехсем хушшинче: «Чехословакине юрататăн пулсан,—хуллен ĕҫле», текен лозунг сарăлнă. Чехословаки патриочĕсене гестапо йĕрлет, ҫĕршер ҫынна персе вĕлереҫҫĕ, анчах ҫакă пулăшмасть. Саботаж чарăнмасть, пачах урăхла, вăл сарăлнăҫемĕн сарăлса пырать».

* * *

Смоленск облаҫĕнчи Пуповка ялĕнче пурăнакансен ушкăнĕ нимĕҫсен фашистла оккупанчĕсен тискер ĕҫĕсем ҫинчен акт ҫырнă. Актра кăтартнă тăрăх, ялта пурăнакансене нумайĕшне гитлеровецсем асаплантарнă та кайран персе пăрахнă. Фашистла ирсĕрсем В. И. Пугачевăнне халхисене касса илнĕ, укăн пĕтĕм кĕлеткине чиксе-ҫурса пĕтернĕ. 17 ҫулти Н. В. Андреевăнне гитлерла мерзавецсем тутине, архатĕрне касса илнĕ, кăкăрĕ ҫинче пилĕк кĕтеслĕ ҫăлтăр касса кăларнă. Асаплантарса вĕлернисем хушшинче—5 ҫулти ача Захаров, 60 ҫулти старикĕсем Василий Замараев, Сергей Жильцов, Михаил Яковлев, 80 ҫулти Влас Пугачев тата ытти старикĕсем, хĕрарăмсемпе ачасем пур.

Нормăна икĕ хут тултарса ĕҫлеҫҫĕ

КАНАШ. МТС-ăн 7-мĕш номерлĕ трактор бригади (бригадирĕ Н. Павлов юлташ) районри «Майăн 1-мĕш» колхоз ҫĕрĕнче ĕҫлет. Суракине вĕсем малтан [illegible] тракторристсене ĕҫшĕн хулса тӳлесси ҫинчен парти пе правительство тăларнă постановлени сӳтсе явнă. Майăн 5-мĕш тĕлне (5 кун хушшинче) бригада 170 гектар сухаланă. Тракторист Тихонов [illegible]

П. СЕРГЕЕВ.

Германири предприятисенче каторгăри пек режим тунă

СТОКГОЛЬМ, майăн 13-мĕш. (ТАСС). «Ангриф» хаҫат Лейăн статьине пичетленĕ. Ҫав статьяра Германири предприятисенче рабочисем валли вăрҫăллă-каторгăлла режим тăвасси ҫинчен уççăнах каланă. Пур фабрикăсемпе заводсенче те ĕҫлĕх фрончĕ текенскерĕнчен «старостăсем» уйăрса лартнă; ҫав старостăсем, Лей каланă тăрăх, «Пруссин ҫарĕнче пĕрремĕш Фридрих Вильгельм лартнă ротнăй фельдфебельсем» пек пулаҫҫĕ. Вĕсен ĕҫĕ — «предпринимательсемпе килĕштерсе ĕҫлесси» пулать.

Малалла Лей рабочисене хӳтĕлекенсене намăсла сăмахсемпе вăрснă. «Ҫавăн пек ирсĕр ҫынсемшĕн Германири предприятисенче вырăн ҫук», — тет Лей, вĕсен ĕҫĕ «халăхи йĕркене хирĕҫ пырать», тет. Юлашкинчен Лей ҫавăн пек «старостăсем» уйăрса лартма кирли ҫинчен ҫырать, «унсăрăн гитлерла йĕркен никĕсĕ хускалма тытăнать», — тет.

«Свенска дагбладет» хаҫатăн корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Лейăн ҫав мероприятийĕсем Германири предприятисенче лару-тăру питĕ те ҫивĕчленсе ҫитнинчен килнĕ. Ҫав корреспондент тата ҫакна кăтартса парать: юлашки вăхăтра Германири хаҫатсенче час-часах «судсен ĕҫлеме килĕшменшĕн хытă айăпласа йышăннă приговорĕсене» пичетлеҫҫĕ.

Гитлеровецсем Виши правительстви умне ҫĕнĕ требованисем лартнă

ЛОНДОН, майăн 15-мĕш. (ТАСС). «Дейли мейл» хаҫатăн корреспонденчĕ Франци чиккинчен ҫапла пĕлтерет: Гитлер Виши правительстви умне ҫĕнĕ, пысăк требованисем лартнă, вĕсене пурнăҫа кĕртмесен, вăл Корсикăна, Тунисса тата Ниццăна Итали аллине парассипе хăратать. Ҫав требованисене Лавале Геринг пĕрле курнăҫса каланă чухне панă. Вĕсем Вишишĕн кĕтмен ҫĕртен кăларса лартнăскерсем пулнă, ҫавăнпа Лаваль ҫийĕнчех телефонпа Петена чĕнсе илнĕ те Петен вара специальнăй поездпа Вишие тавăрнă.

Виши правительстви ларăвĕ пулакса кĕтеҫҫĕ. Нимĕҫсем Виши правительствине Германипе йăлтах килĕштерсе ĕҫлеме тата Франци колонийĕсене Америка сăрхăнса кĕрессине чарса лартма хушаҫҫĕ. Тĕнĕл держависем тата Франци базисемпе хăйсен ҫар карапĕсем валли усă курма право пама та ыйтаҫҫĕ пуль, тесе шухăшлаҫҫĕ. Тата Франци Ҫурҫĕр Африкăри флочĕпе ҫарĕ ҫинчен те ыйту лартма пултараҫҫĕ.

ФРАНЦИЯ—ВĔРЕСЕ ТĂРАКАН ХУРАН

ЛОНДОН, майăн 14-мĕш. (ТАСС). Лондонра илнĕ хыпарсем тăрăх, Францире власть пуҫне Лаваль тăнăранпа лару-тăру ҫивĕчленнĕҫемĕн ҫивĕчленсе пырать. Пĕр сăнавĕ ҫын каланă тăрăх, Франция халь вĕресе тăракан хуран пек. Пĕтĕм Францийĕпех саботажла ĕҫсем умлăн-хыҫлăн пулса пыраҫҫĕ, вĕсем кунран-кун ытларах хăрушăланаҫҫĕ. Ҫакă паллă пулса тăнă: Ачат Сенăри хуласенчен пĕринче каллех 40 француза вĕсем саботажпа Германие хирĕҫле ĕҫсем тăваҫҫĕ тесе айăпласа вĕлернĕ.

Германири гестапон представителĕ Гейдрих Парижа пыни французсем нимĕҫсен ҫавăн пек юнлă ĕҫĕсене хирĕҫ хăюллăн кĕрешнине тăчăн сыхăнса тăрать.

Нимĕҫсен «Парижер цейтунг» хаҫатĕ Франци халăхĕ уççăнах Германие хирĕҫ ҫĕкленме пултарасси пирки хăраса ҫырать.

Хăйсен Франци тылĕ пирки хăранипе гитлеровецсен Вишири пуҫлăхсене ытларах хĕсме пивет. Кунта ҫапла калаҫҫĕ: Геринг Лавальпе курнăҫса каланă чухне Францири шалти лару-тăру ҫинчен тата тулаш политикăра «Франципе Германия килĕштерсе ĕҫлесси» ҫинчен каланă, теҫҫĕ.

Салтаксем патне янă посылкăсенче—фашистсене хирĕҫле листовкăсем

КАИР, майăн 15-мĕш. (ТАСС). Кунта паллă пулса тăнă тăрăх, Софире Германин ҫар влаҫĕсем Болгари правительствине ҫакăн ҫинчен каланă: Германин салтакĕсем патне мăнкун ячĕпе Болгари вĕренекенĕсем янă посылкăсенче нумайĕшĕсенче Гитлера хирĕҫле листовкăсем тупнă, вĕсем ҫинче ҫурлапа мăлатук ӳкерчĕкĕсем пулнă.

Анкарари судра Папен ҫине „тапăнни“ текен ĕҫе пăхни

АНКАРА, майăн 14-мĕш. (ТАСС). Пĕр эрне хушши лару пулман хыҫҫăн ĕнер Анкарари судăн, «Папен ҫине тапăнни» текен ĕҫе пăхса тухакансенкерĕн, пĕр ларăвĕ пулса иртнĕ. Вара ҫав ĕҫе пăхса тухассине ҫĕнĕрен тепĕр эрнене, майăн 20-мĕшне хăварнă.

Судăн ĕнерхи ларăвĕнче совет гражданинĕ Павлов судран айăплакан материалсем хушшинче хăшпĕр документсене вуласа пама ыйтать; Павлов шухăшĕпе, суд вĕсене документсем тесе йышăнма тивĕҫлĕ мар. Тĕслĕхшĕн Павлов Германи посолĕнчен Папен аллинчен тухнă виҫĕ документ ҫине кăтартать; ҫав документсенче взрыв мĕнле обстановкăра пулни ҫинчен виҫĕ тĕрлĕ ҫырса кăтартнă тата взрыв пулнă вырăнпа Папен хушшинне виҫĕ тĕрлĕ цифрăпа кăтартса панă. Павлов тата экспертсен рапортне вуласа пама ыйтать; экспертсем ҫакăн пек вывод тунă пулнă: «Взрыв мĕнле обстановкăра пулни ҫинчен каланисенче хирĕҫӳсем пуррипе, экспертиза ҫав обстановкăна тĕплĕн кăтартса пама пултараймасть, вăл ҫапла пулма пултарнă тесе ҫеҫ калама пултарать». Павлов тата судра халиччен вуласа кăтартман документсене, Ататюрк бульварĕнче бомба ҫурăлса кайнине питех те икĕлентерекен обстоятельствисене ҫутатса пама кирлĕскерсене, вуласа пама ыйтать. Анчах суд Павлов ыйтнисене пурне те сирсе ярать, Павлова ҫав материалсемпе хăйĕн юлашки сăмахĕнче усă курма ҫеҫ ирĕк парать.

Унтан прокурор, судра пăхакан ĕҫпе ҫыхăнман ыйтусем парса (Павлов ĕлĕкрех ютҫĕршывсенче пулнă тесе, Римра вăл фашистла строя сирпĕнтерсе яма, Софире Борис патшана вĕлерме тапăннă тесе) судран ҫав ĕҫсене тĕрĕслеме ыйтса, залри нумай ҫынна култарать. Суд прокурор ыйтнине сирсе ярать.

Ҫав решенирех суд, прокурора хăйĕн айăплакан сăмахне калама хатĕрленме май парас тесе, ĕҫе малалла пăхса тухассине майăн 20-мĕшне хăварни ҫинчен пĕлтерет.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ ЭРЕХ ЗАВОДНЕ

катка-пичке тума тата киввисене юсама пĕлекенсем

ВАСКАВЛĂН КИРЛĔ

Ĕҫукçи—калаҫса татăлнă тăрăх.
Хваттер—общежитире.
Столовăйра апат ҫитереҫҫĕ.
Тĕплĕнтерех ҫак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Чувашская урам, 61, эрех завочĕ, заводри главнăй инженер.

ТРЕБУЮТСЯ:
начальник планового отдела, бухгалтер-ревизор, также бухгалтера в районы.
Адрес: гор. Чебоксары, ул. 2-я Герцена, 32, Чувашский трест Маслопрома.

Наркомфину Чувашской АССР
ТРЕБУЮТСЯ
на постоянную работу опытные машинистки, дворник-охранник, начальник архива, счетовод-кассир, инспектора и ревизоры.
С предложениями обращаться в сектор кадров, по адресу: г. Чебоксары, Красная площадь, № 4.

Чебоксарская
ЮРИДИЧЕСКАЯ КОНСУЛЬТАЦИЯ
оказывает бесплатную юридическую помощь военно-служащим и их семьям по всем правовым вопросам, дает устные советы и составляет деловые бумаги ежедневно: в рабочие дни с 9 до 17 час. 30 мин., в выходные дни с 9 час. до 17 час.
Адрес: гор. Чебоксары, Красная площадь, Наркомюст.

Наркомлесу Чувашской АССР
СРОЧНО ТРЕБУЮТСЯ:
Для работы в аппарате Наркомлеса:
старший инженер по мехтранспорту, начальник ПСО, шофера для легковых автомашин ЗИС-101, ГАЗ-А, главный бухгалтер, начальник финотдела, инженер-технолог.
Для работы в леспромхозах и мехлесопунктах:
инженер или опытный техник-строитель, начальники и техноруки лесопунктов, инженеры и техники по лесозаготовкам, главные и старшие бухгалтера.
Желающих предложить свои услуги просим с заявлениями обращаться по адресу: гор. Чебоксары, ул. Урицкого, 35, Наркомлес Чувашской АССР, или же по телефону № 3—36 в Отдел кадров.

Чебоксарскому кинотеатру
ТРЕБУЮТСЯ
ученики киномеханика-звуковика, пожарник, слесарь, кочегар парового отопления.

Чувашскому сельскохозяйственному институту
ТРЕБУЮТСЯ:
шофер на газогенераторную машину ГАЗ-АА и столяр.
Адрес института: гор. Чебоксары, ул. Калинина, д. № 34.

ПРОПАЛ БАРАН
черной масти, с сединой, остриженный с большими рогами. Просьба за вознаграждение доставить или же сообщить по адресу: гор. Чебоксары, Красноармейская, 3, Санитарно-эпидемическая станция.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 3-67, редакци секретарĕн—4-26, пропаганда парти пурнăҫ пайĕн — 5-31, ялхуҫалăх пайĕн — 3-69, комсомол пурнăҫ пайĕн — 0-65, издательство конторин — 0-23.

НТ 483 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. [illegible]